26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943. НОЯБРЬ 19 ЭРНЕКУН 229(6466) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАСАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Днепр шывӗ урлӑ каҫнӑ чух вӑйлӑн ҫапӑҫнӑшӑн Власов полковникӑн 106-мӗш Забайкальски стрелковӑй дивизине, Фроленков полковникӑн 190-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ стрелковӑй дивизине, Олейников подполковникӑн 143-мӗш минометнӑй полкне, Новиков подполковникӑн 218-мӗш минометнӑй полкне, Трусов майорӑн 61-мӗш моторизованнӑй понтонсемпе кӗперсен уйрӑм батальонне „Днепровски" тесе ят парас, малашне ҫав соединенисемпе чӑҫсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

106-мӗш Днепровски Забайкальски срелковӑй дивизи,
193-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ Днепровски стрелковӑй дивизи,
143-мӗш Днепровски минометнӑй полк,
218-мӗш Днепровски минометнӑй полк,
61-мӗш Днепровски моторизованнӑй понтонсемпе кӗперсен уйрӑм батальонӗ.

Гавер подполковникӑн 14-мӗш Новгород-Северски саперсӑй бригадине тата Попов майорӑн 321-мӗш Новгород-Северски инженернӑй батальонне, нимӗҫ захватчикӗсемпе ҫапӑҫса иккӗмӗш хут чапа тухнӑскерсене, Хӗрлӗ ялав орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи ноябрӗн 17-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Днепр шывӗ урлӑ каҫнӑ чух ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫнӑшӑн тата Днепр урлӑ каҫма ҫарсене шанчӑклӑ каҫӑсем туса панӑшӑн Уманский полковникӑн 240-мӗш стрелковӑй дивизине, Цицишвили капитанӑн 268-мӗш уйрӑм инженерла батальонне тата Петровский капитанӑн ҫулйӗрсем тӑвакан 187-мӗш уйрӑм батальонне „Днепровски" тесе ят парас, малашне вӗсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

240-мӗш Днепровски стрелковӑй дивизи,
268-мӗш Днепровски уйрӑм инженерла батальон,
187-мӗш Днепровски ҫулйӗрсем тӑвакан уйрӑм батальон.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи ноябрӗн 17-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Парновский полковникӑн Киев хулине тытса илнӗ чухне чапа тухнӑ 5-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ минометнӑй полкне, Гаврилов полковникӑн 66-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ минометнӑй полкне, Петраковский майорӑн 16-мӗш гвардейски минометнӑй полкне, Комаров подполковникӑн 1950-мӗш тупӑллӑ артиллери полкне тата Пушкарев подполковникӑн 39-мӗш уйрӑм танковӑй полкне „Киевски" тесе ят парас, малашне вӗсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

5-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ Киевски минометнӑй полк,
66-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ Киевски минометнӑй полк,
16-мӗш гвардейски Киевски минометнӑй полк,
1950-мӗш Киевски тупӑллӑ артиллери полкӗ,
39-мӗш Киевски уйрӑм танковӑй полк.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи ноябрӗн 17-мӗшӗ.

США-па СССР пӗр-пӗринпе дипломатиллӗ ҫыхӑну тытма пуҫлани 10 ҫул тултарнӑ май К. Хэлл господинпа В. М. Молотов пӗр-пӗрин патне янӑ телеграммӑсем

Унӑн превосходительствине В. М. Молотова, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарне

МУСКАВ

Вунӑ ҫул каялла Совет Союзӗпе Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫыхӑнӑвӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланнине эпӗ савӑнса аса илетӗп, ҫав тапхӑра пула пирӗн халӑхсем пӗр-пӗрне ытларах ӑнланма тата пӗр-пӗринпе туслӑнрах пурӑнма пуҫларӗҫ, вӑл пирӗн икӗ ҫӗршыва лаян пӗр-пӗринпе килӗшсе ӗҫлеме никӗс тупса пачӗ. Эпӗ ҫакна ӗненсе тӑратӑп: пирӗн нумаях пулмасть пулса иртнӗ Мускаври конференцие ҫитес уйӑхсемпе ҫулсенче — вӑл Совет Союзӗпе Америка хушшинчи ҫыхӑнусенче историллӗ пысӑк утӑм туни тата ирӗклӗхпе миршӗн тӑрӑшакан ирӗклӗ нацисем пурте пӗр-пӗринпе тачӑрах ҫыхӑнса ӗҫлес вӑхӑтӑн пуҫламӗшӗ пулса тӑчӗ, тесе хаклӗҫ.

КОРДЭЛЛ ХЭЛЛ,
Государственнӑй секретарь.

Кордэлл Хэлл господина, США-н Государственнӑй секретарьне

ВАШИНГТОН

Совет Союзӗпе Америка пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытма тытӑннӑранпа иртнӗ вунӑ ҫул пирӗн ҫӗршывсем хушшинчи ҫыхӑнусем ҫирӗп никӗс ҫинче тӑнине тата вӗсем пирӗн халӑхсен интересӗсемшӗн пулса пынине кӑтартса пачӗҫ.

Гитлерла Германие хирӗҫ пӗрле кӗрешни (пирӗн ҫыхӑнусене тата ытларах ҫирӗплетрӗ, вӑл пирӗн ҫӗршывсем пӗр-пӗрне ӑнланса, пӗр-пӗрне шанса ӗҫлессине ӳстерме пулӑшрӗ тата вӑл Совет Союзӗпе Америка хушшинче боевой ҫыхӑну тума пулӑшрӗ.

Нумаях пулмасть хупӑннӑ Мускаври конференци ҫакна кӑтартса пачӗ: Совет Союзӗпе Америка хушшинчи ҫыхӑнусем малашне те ӑнӑҫлӑн ӳссе пыма пултараҫҫӗ, вӗсем вӑрҫӑ пӗтес срока кӗскетмешкӗн тата ирӗке юратакан мӗнпур халӑхсемшӗн ҫирӗп те нумай вӑхӑта пыракан мир тумашкӑн кирлӗ услови пулса тӑраҫҫӗ

В. МОЛОТОВ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Белоруссн фрончӗн ҫарӗсем, хӑвӑрт куҫса ҫӳрекен соединенисемпе пехота вӑйлӑ наступлени тунине пула, ноябрӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле, виҫӗ кун хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, Речица хулине — Днепр шывӗн вӑтаҫӗрӗнчи сылтӑм енче нимӗҫсен коммуникацийӗсен пысӑк тӗввв тата вӗсен оборонин питех те кирлӗ тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан хулана тытса илнӗ.

Речица хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче Батов генерал-лейтенантӑн, Романенко генерал-лейтенантӑн, Алексеев генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн Пановӑн танкисчӗсем, Константинов генерал-майорӑн кавалерисчӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн Руденкӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Уйрӑмах ҫаксем чапа тухнӑ:

Брушко полковникӑн 37-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ стрелковӑй дивизийӗ, Черняк полковникӑн 162-мӗш Средне-азиатски Новгород-Северски стрелковӑй дивизийӗ, Цыпленков полковникӑн 170-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, Опякин полковникӑн 194-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, Кожанов подполковникӑн 15-мӗш гвардейски танковӑй бригади, Филиппенко полковникӑн 16-мӗш гвардейски танковӑй бригади, Демидов полковникӑн 23-мӗш Глуховски уйрӑм танковӑй бригади, Новиков подполковникӑн 218-мӗш Днепровски минометнӑй полкӗ, Остапенко полковникӑн 478-мӗш минометнӑй полкӗ, Гончарук полковникӑн 543-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, Желямский полковникӑн 20-мӗш Сталинградски истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади, Соболев полковникӑн 35-мӗш гвардейски минометнӑй бригади, Тарасов подполковникӑн 479-мӗш минометнӑй полкӗ, Травкин полковникӑн 68-мӗш Севски тупӑллӑ артиллерин уйрӑм бригади, Значенко полковникӑн 4-мӗш гвардейски истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади, Телегин полковникӑн 2-мӗш гвардейски гаубицӑллӑ артиллери бригади, артиллери генерал-майорӗн Серединӑн 3-мӗш гвардейски ҫӳлелле перекен артиллери дивизийӗ, Огарков подполковникӑн 1168-мӗш тупӑллӑ артиллери полкӗ, Бубликов майорӑн 220-мӗш гвардейски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, Комаров полковникӑн 2-мӗш гвардейски Черниговски штурмовой авиаци дивизийӗ, Борисенко полковникӑн 271-мӗш Сталинградски ҫӗрлехи бомбардировочнӑй авиаци дивизийӗ, Куриенко полковникӑн 241-мӗш бомбардировочнӑй авиаци дивизийӗ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, Речица хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене „Речицки" тесе ят парас.

Вӑл соединенисемпе чӑҫсене малашне ҫапла чӗнмелле тӑвас:

37-мӗш гвардейски Хӗрлӗ ялавлӑ Речицки стрелковӑй дивизи,
170-мӗш Речицки стрелковӑй дивизи,
194-мӗш Речицки стрелковӑй дивизи,
15-мӗш гвардейски Речицки танковӑй оригада,
16-мӗш гвардейски Речицки танковӑй бригада,
23-мӗш Глуховско-Речицки уйрӑм танковӑй бригада,
218-мӗш Днепровско-Речицки полк,
478-мӗш Речицки минометнӑй полк,
543-мӗш Речицки истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
20-мӗш Сталинградски-Речицки истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади,
35-мӗш гвардейски Речицки минометнӑй бригада,
479-мӗш Речицки минометнӑй полк,
68-мӗш Севско-Речицки тупӑллӑ артиллерин уйрӑм бригади,
4-мӗш гвардейски Речицки истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади,
2-мӗш гвардейски Речицки гаубицӑллӑ артиллери бригади,
3-мӗш гвардейски Речицки ҫӳлелле перекен артиллери дивизийӗ,
1168-мӗш Речицки тупӑллӑ артиллери полкӗ,
220-мӗш гвардейски Речицки истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
2-мӗш гвардейски Черниговско-Речицки штурмовой авиаци дивизийӗ,
271-мӗш Сталинградско-Речицки ҫӗрлехи бомбардировочнӑй авиаци дивизийӗ,
241-мӗш Речицки бомбардировочнӑй авиаци дивизийӗ.

1-мӗш гвардейски Донской танковӑй корпуспа 162-мӗш Средне-азиатски Новгород-Северски стрелковӑй дивизие, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче иккӗмӗш хут чапа тухнӑскерсене, Хӗрлӗ ялав орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Паян, ноябрӗн 18-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици Мускав Речица хулине ирӗке кӑларнӑ пирӗн паттӑр ҫарсене ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран вуникӗ хут пӗр харӑс персе Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ лайӑх ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, Речица хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, тав тӑватӑп.

Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ Геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи ноябрӗн 18-мӗшӗ.

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ С. П. Спасокукоцкий академик вилни ҫинчен пӗлтерни

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ вырӑссен паллӑ ученӑйӗ хирург Сергей Иванович Спасокукоцкий академик йывӑр чирленӗ хыҫҫӑн вилни ҫинчен чунтан хуйхӑрса пӗлтерeҫҫӗ.

ССР Союзӗн Совнаркомӗ,
ВКП(б) Центральный Комитечӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ВАТУТИНА

Украинӑри 1-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, наступление малалла аталантарса пырса, икӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, противник хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе те ноябрӗн 17-мӗшӗнче каҫ пулнӑ тӗле питех те паха чугун ҫул тӗввине тата нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пысӑк пунктне — Коростень хулине тытса илнӗ.

Коростень хулине тытса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне Черняховский генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем чапа тухнӑ.

Уйрӑмах ҫаксем чапа тухнӑ:

Петренко полковникӑн 226-мӗш Глуховско-Киевски стрелковӑй дивизийӗ, Голосов генерал-майорӑн 280-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ Конотопски стрелковӑй дивизийӗ, Заикин полковникӑн 143-мӗш Конотопски стрелковӑй дивизийӗ, Гладков полковникӑн 112-мӗш Рыльски стрелковӑй дивизийӗ, Угрюмов полковникӑн 150-мӗш Киевски уйрӑм танковӑй бригади, Россомахин полковникӑн 130-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, Хлопенко подполковникӑн 316-мӗш гвардейски минометнӑй полкӗ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, Коростень хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене „Коростеньски" тесе ят парас.

Вӑл соединенисемпе чӑҫсене малашне ҫапла чӗнмелле тӑвас:

280-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ Конотопско-Коростеньски стрелковӑй дивизи,
143-мӗш Конотопско-Коростеньски стрелковӑй дивизи,
112-мӗш Рыльско-Коростеньски стрелковӑй дивизи,
150-мӗш Киевско-Коростеньски уйрӑм танковӑй бригада,
130-мӗш Коростеньски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
316-мӗш гвардейски Коростеньски минометнӑй полк.

226-мӗш Глуховско-Киевски стрелковӑй дивизие, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче виҫҫӗмӗш хут чапа тухнӑскере, Хӗрлӗ ялав орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Паян, ноябрӗн 18-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутӑра пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столици Мускав Коростень хулине ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран вуникӗ хут пӗр харӑс персе Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ лайӑх ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, Коростень хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, тав тӑватӑп.

Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ Геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи ноябрӗн 18-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 17-мӗшӗнче ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, унӑн оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ВЕСЕЛАЯ ДОЛИНА, КРУТОЙ, НАЙ-ВЕГ, ГУЛЯЙ ПОЛЕ, НЕУДАЧНАЯ, ТОМАКОВКА, БОГОЛЮБОВКА ятлӑ тӗреклӗ пункчӗсене тытса илнӗ.

ЖИТОМИРПА КОРОСТЫШЕВ районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсемпе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ, тӑшман хӗснипе, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта хӑварнӗ.

КОРОСТЕНЬ хули енче пирӗн ҫарсем Житомир облаҫӗнчи НАРОДИЧИ ятлӑ район центрне тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ, вӗсен шутӗнче САРНОВИЧИ, ТАТАРНОВИЧИ, ХОДАКИ, МЕЖИРИЧКА, НЕМИРОВКА, СЫНГАИ, ЗУБОВЩИНА, НОВАКИ, КОЗИНОВКА ятлӑ пысӑк ялсем пур.

ПРИПЯТЬ шывӗн анат тӑрӑхӗнчи районра пирӗн ҫарсем Киев облаҫӗнчи ЧЕРНОБЫЛЬ ятлӑ район центрне тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ЧЕМЕРИСЫ, АСАРЕВИЧИ, КОЛЫБАНЬ, ПОСУДОВО, КРИВАЯ ГОРА, ЗАЛЕСЬЕ, ЗАПОЛЬЕ, НОВОСЕЛКИ ялӗсене тытса илнӗ.

РЕЧИЦЫ хули районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ПЕРЕСВЯТОЕ, РЕБУСА, ДЕРАЖНЯ, РЕЧИЦКАЯ РУДНЯ, ОЗЕРЩИНА ятлӑ тӗреклӗ пункчӗсене тытса илнӗ, РЕЧИЦА хулинче ҫапӑҫнӑ.

ГОМЕЛЬТЕН ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем СОЖ шывӗн сылтӑм енчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Ноябрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 146 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 14 самолетне персе ӳкернӗ

НОЯБРӖН 18-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, икӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, противник хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе те ноябрӗн 17-мӗшӗнче каҫ пулнӑ тӗле КОРОСТЕНЬ хулипе чугун ҫул тӗввине тытса илнӗ.

ЖИТОМИРПА КОРОСТЫШЕВ районӗсенче пирӗн ҫарсем противник пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсем тунӑ атакӑсене сирсе-сирсе янӑ. Ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра противник ҫынсемпе техника питӗ нумай сухатнӑ.

БЕЛОРУССИ фрончӗн ҫарӗсем, хӑвӑрт куҫса ҫӳрекен соединенисемпе пехота вӑйлӑн тапӑнса пынине пула, ноябрӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле, виҫӗ кун хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, РЕЧИЦА хулине тытса илнӗ. Малалла тапӑнсе пырса, куфронтӑн ҫарӗсем халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла тытса илнӗ, вӗсен шутӗнче Полесье облаҫӗнчи ВАСИЛЕВИЧИ ятлӑ район центрӗ, БАЛАШЕВКА, ГАВЕНОВИЧИ, БУДКА, ШИБЕНКА, СТАРОЕ КРАСНОЕ, НОВОЕ КРАСНОЕ, ВАСИЛЬКОВО, ГОЛОВКИ ятлӑ пысӑк ялсем пур. Пирӗн ҫарсем пырса ҫапнине пула, противник ҫынсемпе техника тӗлӗшпе пысӑк ҫухатусем тӳснӗ.

Ноябрӗн 18-мӗшӗнче ПРИПЯТЬ шывӗн анат вӗҫӗнче пирӗн ҫарсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ, ҫав вӑхӑтра темиҫе пысӑк яла тытса илнӗ, вӗсен шутӗнче СТАРЫЕ тата НОВЫЕ ХРАКОВИЧИ, ЛЕЛЕВ, БОЛЬШОЙ тата МАЛЫЙ КОРОГОД, ЖОЛНИРОВКА, ИЛЬИНЦЫ, РУДНАЯ ИЛЬИНСКАЯ ятлӑ пысӑк ялсем пур.

ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен хирӗ-хирӗҫ персе тӑнӑ.

Ноябрӗн 17-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 75 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен тупӑсенчен персе противникӑн 13 самолетне ӳкернӗ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен

Чугун çул валли вутă хатĕрлес плана тултарас, çавăн пекех промышленность предприятийĕсемпе хуласем валли çителĕклĕ топливо хатĕрлес шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ноябрĕн 20-мĕшĕнчен декабрĕн 20-мĕшĕ хушшинче вăрман хатĕрлес енĕпе фронтовой уйăхлăх ирттерме йышăнчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене тата вăрман хатĕрлекен предприятисене вăрман хатĕрлемелли плана район, колхоз, предприяти тăрăх тултарас тата уйăхлăх чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе иккĕмĕш çурçулăхри плана тултарассипе ĕçе хăвăртлатма хушнă.

Совнаркомпа Обком вăрман хатĕрлевĕне ĕçлеме çынсене турттăр вăйĕ палăртнă таранах мобилизацилесе, вĕсене вăрман хатĕрлевĕн хĕллехи сезонĕнче ĕçлеме çирĕплетсе хăварма хушнă.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен лашасем валли пĕтĕм сезонра кирлĕ çулăпа шултăра апатсем хатĕрлесе хумалла.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ вăрман хатĕрлекен предприятисене вăрманта ĕçлеме пыракан колхозниксене тăма, вăрман касакансемпе турттаракансен производствăри ĕçне организацилеме, вĕсен культурăпа пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтересе тăма хушнă.

Кашни рабочин ĕç нормине тултарас тĕлĕшпе вăрман пункчĕсем, участоксем тата рабочи бригадисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарма хушнă.

Днепр шывĕн леш енче

Ватă Атăл çынни эпĕ.

— Акă вăл, пирĕн Днипро!—терĕ рядовой Сергей Гринько, хăйĕн тăван шывĕ хĕрне тухсан. Савăнсах ĕçрĕм Днепр шывне эпĕ те унпа пĕрле. Атăл шывĕ тути калать Тутлă.

Текех çак шыва нимĕç пăтратаймĕ. Вăтах та касăшăмарччĕ вăл унтан. Алли-урипе ярса тытмаччĕ вăл Днепр шывĕ хĕррине тусенчен, тĕмĕсене те тапалашрĕ, пĕтсĕр,—çыпантам хăпасшăн мар.

Халĕ нимĕç каллех ура тупанне кăтартать. Пĕтĕм вăйран харсăрланан та, ирсĕр нимĕçĕн чакмах тивет. Днепр шывĕ хĕррипелле чакни чухне вĕсем çапла каларĕç: «Днепр леш енче — пирĕн çирĕп вырăн. Пĕр утăм та чакмастпăр. Совет çар Днепр леш енче каçаймĕ». Халĕ фрицсем урăхла юрлаççĕ: «Каллах чаксан, киле çитме те йывăр мар». Ак çавăн пек пулнă вĕсен Днепр леш енчи «çирĕп вырăнĕ». Нимĕçсен ячĕ çук, çавăнпа та тарса кайма хатĕрскер?.. Пĕлме йывăр мар — хĕрлĕ воин вĕсене ăс-тăн кĕртет.

Нимĕçе кил шухăшĕ килсе кĕчĕ иккен! Пит туртăмлă ĕмĕт ĕнтĕ. Анчах ĕç тухмĕ капла! Ямăлăр вĕсене киле, йытă амисем патне. Киле мар, çĕр ăшне ăсанĕç вĕсем. Çавăнта вĕсен чăн-чăн килĕ!

Чĕререн тарăхнă эпир ылханлă нимĕçсене. Мĕнле тарăхас мар! Кашни утăмра вĕсен ирсĕр, чăрсăр ĕçне куратпăр. Пăхăр-ха, вĕсем тăвакан «мертвая зона» (вилĕмле пушă хир) куç умне мĕнле тухса тăрать. Аçта ĕлкĕреççĕ, унта тĕпĕ-йĕррипех çунтараççĕ, ялсене, уйри тырпула, ялхуçалăх машинисене, çынсене, вылĕх-чĕрлĕхе Германие илсе каяççĕ.

Акă М. ятлă ял. Пĕр çурт та юлман, йăлтах çунтарнă. Колхозниксен ĕнисене илсе тухса кайнă. Çавăтса кайма пултарайманнисене персе пăрахнă. Урам тулли чăх-чĕп тĕкĕ. Мĕн айăпа кĕнĕ-ши тата йытăсемпе кушаксем,—вĕсене те пере-пере вĕлерсе пĕтернĕ.

Çавăн пек çартан мирлĕ çынсене ыра-сыввăн çăлăнса юлма питех те хĕн. Совет патриочĕсем, тăван çĕршыв çыннисем, хăйсене Германие хăваласа каясран ăçта май килнĕ — унта пытанса юлаççĕ.

Асăннă ялта пырса кĕрсенех, пирĕн воинсене çийĕнчех çавăрса илчĕç. Унтан та кунтан та—тĕрлĕ вырăнтан: хăшпĕрисем нÿхрепсенчен, хăшĕсем çăмкка кĕрчĕсенчен тухса, çынсем çĕр çине сике-сике тухрĕç. Кашни ыталасшăн: Кам мĕнпе пуян, çавна кĕтсе илет: кам арбуз, кам панулми, кам сĕт илсе тухса кученнес параççĕ вĕсене, йăпанас апатланттарасшăн.

— Ырă тусăмăрсем! — Маттур ывăлăмăрсем! Сире кĕтнĕ эпир... Çĕрĕн-кунĕн сирĕн çинчен шухăшланă, чĕннĕ эпир сире! — терĕ куççуль çĕнсе шăлса тинĕпе, ватă колхозница Фридкова.

— Хăтăрах хăвăлăр тăшмана! Нимĕç пусмăрне тÿсме ытла та йывăр, хăтарăр часрах ытти тăвансене те пусмăртан, — тесе асатаççĕ Хĕвеланăçнелле каякан боецсене украинецсем.

Вĕсен наказне совет воинĕ кашни тăкăнăр ăсра тытать. Вырăс, украинец, киргиз, тутар, чăваш — пурте тăван Украинăшăн, Белоруссишĕн, Одессăшăн, Львовшăн тата ыттисемшĕн те çапăçаççĕ.

Днепр урлă каçрĕ анчах, вырăс боецĕ-бронебойщик Ткачев тăшманăнне икĕ танк аркатрĕ, пĕр автомашина çĕмĕрчĕ. Кĕске вăхăтрах украинец Чмырь хăйĕн танкĕпе виçĕ тупă, пĕр автомашина таптаса тăкрĕ, ун аллинчен алă нимĕç вилĕм тупрĕç. Чăваш ачи Михеев (Çĕрпÿ тавращĕнчен) икĕ кун хушшинче виçĕ хут атакăна кĕчĕ. Гитлеровецсене вун-вунпилĕк çынран кая мар хăйĕн автомачĕпе шăлса тăкрĕ вăл. Ана халĕ «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Çапла çапăçаççĕ пирĕн паттăрсем. Ялтан-яла, хуларан хулана хăватлăн ярса пусать совет воинĕн çирĕп ури. Паттăр утăмпа малалла, хĕвеланăçнелле утать пирĕн Хĕрлĕ Çар. Ана унта кĕтеççĕ. Мухтавлă çар вăхăтлăха нимĕç пусмăрне лекнĕ çынсем патне çитет-çитетех! Халлĕхе нимĕç хуçаланакан пирĕн çĕршыван хĕвелаçăс районĕсенчи хуласемпе ялсенче те кĕçех каллех телейлĕ пурнăçăн символĕ—пирĕн юратнă хĕрлĕ хăмач, тăван ялав çуттăн вĕлкĕшĕ.

Капитан И. АЛТЫН-БАШ.
ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943 çулхи иккĕмĕш çур çулти плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	84,1	66,9	1	1
Сĕнтĕрвăрри	80,6	63,1	2	5
Шăхасан	67,3	62,7	3	6
Улатăр	67,2	63,6	4	4
Канаш	66,6	64,2	5	3
Вăрмар	65,2	66,1	6	2
Вăрнар	63,4	51,6	7	10
Çĕрпÿ	61,2	61,1	8	7
Сĕнтĕр	59,2	36,1	9	22
Комсомольски	56,2	36,0	10	23
Первомайски	55,7	58,9	11	9
Калинино	54,9	43,2	12	14
Советски	52,1	38,3	13	19
Куславкка	50,9	44,6	14	12
Елчĕк	50,8	39,6	15	17
Элĕк	50,1	37,8	16	21
Шупашкар	50,3	38,6	17	18
Çĕмĕрле	46,9	40,8	18	16
Красноармейски	45,6	41,6	19	15
Октябрьски	42,1	32,8	20	25
Етĕрне	40,7	35,2	21	24
Ишлей	36,2	37,8	22	20
Тăвай	33,8	60,7	23	8
Чкаловски	28,2	29,0	24	27
Шăмăршă	27,8	45,0	25	11
Хĕрлĕ Чутай	24,2	29,1	26	26
Пăрачкав	23,4	44,2	27	13
Кувакино	3,2	23,8	28	28

Вăрман хатĕрлекенсен тухăçлă ĕçĕ

ВĂРНАР. Вăрманпромхозри рабочисем тата вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем Йĕпреç вăрманпромхоз коллективĕ ăмăртăва тухма чĕннине хаваслансах йышăнчĕç. Вĕсем вăрман хатĕрлесе турттарас плана срокчен тултарма сăмах пачĕç. Халĕ вĕсем нумайĕшĕ хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ.

Пинер вăрманпунктĕнчи вăрман касакансем М. Христофоров, Е. Прокопьев юлташсем уйăхри нормăна 200-шер процент тултараççĕ. Çавăн пекех Е. Арсентьева, Н. Ундрицов тата ытти чылай юлташсем уйăхри нормăна 190-шар процент тултараççĕ.

Вăрманпромхозри ытти вăрманпункчĕсенче те стахановецсен йышĕ ÿссех пырать.

И. ПЕТРОВ.

Колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче

ЙĔПРЕÇ. Вăрманпромхозра чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекен Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксенчен нумайĕшĕсем лайăх результатсем кăтартаççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Григорьева, Арсентьева, «Богатырь» колхоз членĕсем Е. Трофимов, М. Комиссаров юлташсем нормăна 150—170 процент тултараççĕ. Стахановла ĕçленĕшĕн вĕсене премисем панă.

Анчах та вăрманпромхоз çумне çирĕплетнĕ чылай колхозсем хăйсен заданийĕсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртмеççĕ-ха. Вăрманкас ялсовечĕ октябрь уйăхĕнче ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса яман. Çĕньял, Семеновка тата ытти чылай ялсовечĕсенчи колхозсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

И. АЛЕКСЕЕВ.

Çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ

КАНАШ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем Сталин юлташ докладне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Сталин юлташ докладне сÿтсе-явас ыйтупа пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç. Вĕсенче рабочисемпе работницăсем фронта пулăшассишĕн хастарлăн ĕçлеме пулса çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

— Пирĕн комплекс, — терĕ Шувалкин юлташ вагонсем юсакан цехра пухăннă митингра, — октябрьти плана ăнăçлăн тултарчĕ. Ноябрьте эпир производство плане, октябрьтипе танлаштарсан, 5 процент ытларах тултарма пулатпăр.

— Сталин юлташ докладĕ мана çĕнĕ вăй-хăват пачĕ, — терĕ тимĕрç цехĕнчи митингра электросварщик Ластовка юлташ. — Эпĕ малашне ĕç нормине кулленех 300 процентран кая мар тултарса пыма пулатăп.

Тимĕрç цехĕнчи ытти рабочисем те çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Çапла, тимĕрç Мельник юлташ кунсеренех 4 норма тултарма пулчĕ.

Йывăç каскалакан цехра та митинг пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Рабочисемпе работницăсем хăйсем фронта пулăшма яланах хатĕр пулни çинчен калаççĕ.

— Эпĕ ĕç нормине яланах ирттерсе тултарнă,— терĕ Омельченко юлташ. Малашне татах та хастарлăн ĕçлесе кунсерен виçĕ норма тултарма пулатăп. Манăн ĕç нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах аркатса тăкма пулăштăр.

Пĕтĕм завод коллективĕ халĕ патриотла туйăмпа ĕçлет. Нумай рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Л. С. ЕГОРУШКИН.
Партбюро секретарĕ.

ХАВАСЛАНСА ĔÇЛЕÇÇĔ

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Сталин юлташ Ĕçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн 1943-мĕш çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад колхозниксен çĕнĕ программи пулса тăчĕ. Вĕсемшĕн çулпуçăн кашни сăмахĕ хаклă. Ана вĕсем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыма тупа тăваççĕ.

Колхоз кăçал ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государствăна планран ирттерсе 680 пăт ытла тырă тата ытти продуктсем пачĕ. Çулпуçăн докладĕ çине ответлесе, колхозниксем фронта пулăшас ĕçе тата вăйлатма пулчĕç.

«Труд» колхоз членĕсем кăçал тĕрăпса ĕçленĕпе тырă нумай туса илчĕç. Аванс шучĕпе кăна вĕсем пĕрер килограмм ытла тырă, иккшер килограмм çĕрулми тата ытти çимĕçсем те илчĕç. Государство умĕнчи пур обязательствăсене те ытлашшипех пурнăçланă. Пĕтĕм парăмсене парса татнă хыççăн çĕршыв оборонин фондне татах 647 килограмм тырă хывреç. Анчах вĕсем тунă ĕçсемпе лăпланса лармаççĕ. Колхоз халĕ килес çулхи çуракине хатĕрленме вăйлăн тытăнчĕ. Вăрлăх фондне хывса çитернĕ, ăна сортларĕç, уйрăм амбарсене пуçтарса хучĕç. Ялхуçалăх машинисене пурне те пуçтарса кĕртрĕç. Вĕсенчен хăшпĕрине юсаса та хучĕç.

Ют çĕршывсенче

Пресс-конференцире Хэлл тухса калани

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Государственнăй секретарь Хэлл Мускаври конференцин итогĕсем çинчен каласа пама пухнă пресс-конференцире сăмах тухса каланă. Хэлл каланă тăрăх, Мускаври конференцире алă пуснă тăватă çĕршывăн декларацийĕ пĕтĕмĕшле мирпе наци хăрушсăрлăхĕ валли никĕс хывса хăварчĕ тата вăл Совет правительствин шухăшĕсемпе программисене лайăххрах ăнланма май пачĕ. Хэлл Сталина, Молотова тата Литвинова пысăк вырăна хурса хакланă.

Пресс-конференцие уçнă чухне Хэлл çапла каланă: Мускаври канашлу питĕ интереслă пулчĕ, вăл пĕр-пĕрипе килĕшес шухăш-кăмăллă обстановкăра пулса иртрĕ, вăл питĕ ăнăçлă пулчĕ. Мускаври конференци,—тенĕ Хэлл, — экономика ыйтăвĕсене тата ытти ыйтусене те сÿтсе-яврĕ, пулăшу пама тивĕçлĕ халăхсене пĕрле пулăшас ĕçĕн никĕсне хыврĕ, пуринчен ытла вăл вăрçă хыççăнхи ыйтусене пĕрле татса парас тĕлĕшпе пысăк ĕç турĕ. Мускаври конференцин задачи çавăн пек пулнă ĕнтĕ.

Хэлл малалла çапла каланă: нимĕнле конференцире те Мускаври конференцири пек пĕр-пĕрипе кăмăллăн çыхăнса ĕçлеменччĕ-ха. Сталин тата эпĕ тĕл пулса калаçнă çынсем ыттисем те хăйсен ĕçĕсенче, шухăшĕсенче тата çыхăнăвĕсенче питĕ кăмăллă çынсем пулчĕç. Совет халăхĕ кĕрешни пуринчен ытла кăмăла кайрĕ, çав кĕрешÿре темĕн чухлĕ çын хăйсен тăван çĕршывне хÿтĕлесе вилнĕ. Çынсен çав пахалăхне хисеплемесĕр тăма çук.

Хэлл çакна палăртнă: Мускаври конференцире нимĕнле секретлă килĕшÿсем те туман, тенĕ. Конференцин решенийĕсем çинчен каласа, Хэлл тата çакна палăртнă: тăватă çĕршывăн декларацийĕ пĕтĕм тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрипе çыхăнса ĕçлессин анлă программине çырса хатĕрлеме шухăш тытни çинчен калать. Çав ыйтусем çине çавăрăнса пăхасах пулать, унсăрăн каярахпа эпир пăтрашса кайма пултаратпăр. Мускаври конференцире пурне те интереслентерекен тата пĕр-пĕрне ăнланма пулăшакан нумай ыйтусене сÿтсе-явнă, çав ыйтусем тĕлĕшпе уйăччен шухăшсем уçăмлах пулман, тенĕ.

ИТАЛИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕплĕн пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 5-мĕш армийĕ тата Англин 8-мĕш армийĕ, çанталăк начар тăнине пула, малалла тапăнман. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Грецин Афины патĕнчи Элевсин аэродромне тапăннă. Çав вăхăтрах Каламаки аэродромне те пырса тапăннă. Икĕ аэродромĕ çине те питĕ нумай бомба пăрахнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, çанталăк начар тăнине пула Америкăн 5-мĕш армийĕн тата Англин 8-мĕш армийĕн фрончĕсенче çапăçусем вăйлă пулман. Патрульсем çапăçнă. Тыткăна илнисем пур.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕлле «Москито» йышши самолетсем Германин хĕвеланăç пайĕнчи объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Паян ирпе Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Норвегие пырса тапăннă.

Ноябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман авиацийĕ Кăнтăр Англие тапăннă. Тунă сиен пысăках мар. Тапăнни вăхăтра çынсем вилни те пулнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи çине пăрахнă 96.000 тонна бомбăран 50.000 тоннине Рур облаçĕнчи металлурги заводĕсем çине, çăмăл-ту промышленность предприятийĕсем, химя заводĕсем, чугун çул объекчĕсем тата порт сооруженисем çине пăрахнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕплĕн пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 16-мĕшĕнче Америка самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Норвегири икĕ объекта ăнăçлăн пырса тапăннă. Çавăн чухне Кнабенри молибден рудникĕсем çине тата Рюканри электростанци çине бомбăсем пăрахнă.

Ноябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ Афинăран 10 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырнаçнă Элевсин аэродромне пырса тапăннă. Унсăр пуçне Долмаци çыранĕнчи Сплитран 30 миля çурçĕртерехре вырнаçнă Шибеник (Югославия) гаванне пырса тапăннă.

ЮНРРА СОВЕЧĔН СЕССИЙĔНЧЕ

АТЛАНТИК-СИТИ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕрлешÿллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен администрацин совечĕ (ЮНРРА) çакăн пек тăватă комисси тунă: организаци тата администраци ыйтăвĕсемпе (вăл комиссин председателĕ-бельгиец Спаак, вице-председателĕ — перуанец Чавес); пĕтĕмĕшле политика ыйтăвĕсемпе (ку комиссин председателĕ — Совет Союзĕн представителĕ Сергеев юлташ, вице-председателĕ—абиссинец Эфрем Баш); финанспа снабжени ыйтăвĕсемпе (унăн председателĕ — француз Монэ, вице-председателĕ—кубинец Хутьерлес); тăваттăмĕш комисси—пулăшса ура çине тăратмалли майсене тупас ыйтусемпе.

КĔСКЕН

● Акăлчансен «Таймс» ятлă хаçачĕ Черчилль арăмĕ каланине пичетлесе кăларнă. Черчилль арăмĕ çапла каланă: октябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне Совет Союзне пулăшмалли фонда тăватă миллион кĕрепенкке стерлинг ытла укçа пухăннă. Çав укçан пысăк пайне рабочисем панă. Темиçе çĕр пин рабочи çав фонда кашни эрнерех хăйсен укçине хывса тăраççĕ.

Ĕçсынни Депутачĕсен Шупашкар Хула Совечĕн Депутачĕсене пĕлсе тăма

1943 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская урам, 6) Ĕçсынни Депутачĕсен Шупашкар Хула Совечĕн XXII Сессийĕ уçăлать.

Сесси çак ыйтăва пăхса тухать:

Хула бюджетне 1943 çулхи 10 уйăх хушшинче пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совечĕн Депутачĕсем Сессине хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Шупашкар Хула Совечĕн Исполкомĕ.

ВУЛАКАНСЕНЕ

«Чăваш коммуни» хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 21-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лайăх пăхса усрар

Хĕллехи вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсанипе пĕрлех вĕсене пăхса усрасси çине хытă çаврăнса пăхмалла. Машинăсене тирпейлĕ тытса усраманни МТС-сене чылай сиен кÿме пултарать. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çакна палăртнă: тракторсемпе машинăсене юсама каякан пĕтĕм укçа-тенкĕ хисепĕнчен 30 процентĕ вĕсене тирпейсĕр усранă пирки пулать. Уйрăм МТС-сенче укçа-тенкĕне мĕнле расходланине тишкерсе пăхсан та çавăн пек фактсенех куратпăр. Вăрнарти МТС 1942—1943 çулсенче машинăсене республикăри ытти МТС-сенчен лайăхрах пăхса усранă. Çапла вăл машинăсене юсанă çĕре каймалли укçана 11.100 тенкĕ перекетленĕ. Йĕпреçри МТС та машинăсене лайăх пăхса усранипе 4.700 тенкĕ перекетлеме пултарнă. Шăхасанти, Елчĕкри МТС-сем те машинăсене начар мар пăхса усранă. Пăрачкаври, Кувакинăри, Çĕрпÿри МТС-сенче пачах та урăхла фактсене куратпăр. Пăрачкаври МТС-ра нумай машинăсене хĕллехи вăхăтра колхозсенче хăварнă, вĕсене тăтăшах тĕрĕслемен. МТС килкартинчи машинăсене те лайăх йĕркелесе лартман. Çаксене пула вăл тракторсене юсама укçа-тенкĕ планпа пăхнинчен 44.300 тенкĕ ытлашши расходланă. Кувакинăри МТС та планпа пăхнинчен 61.300 тенкĕ ытларах расходланă. Çĕрпÿ МТС-ĕнче те çавăн евĕрлех пулнă. Асăннă МТС-сенче машинăсене юсас плана та тултарман.

Машинăсене пăхса усрас ыйту уйрăмăнах вăрçă вăхăтĕнче çивĕччĕн тухса тăрать. Халĕ промышленность пуринчен ытла фронт ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ĕçлет, металл фронта кирлĕ. Çавăнпа та пирĕн, ялхуçалăх работникĕсен, машинăсене тирпейлĕ пăхса усрассишĕн тăрăшмалла. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тракторсемпе машинăсене пăхса усрасси çинчен 1942 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче ятарласа постановлени кăларнă. Постановленире тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пăхса усрамалли йĕркесене кăтартса панă. Вăл йĕркесем тăрăх, МТС бригадирĕсемпе комбайнерĕсен, машинисчĕсен хăйсен тракторĕсемпе ялхуçалăх машинисене çуллахи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн тĕплĕн тасатса, актсем çырса памалла. Машинăсене йышăннă чухне вĕсем техника тĕлĕшĕнчен мĕн таран хатĕррине кăтартса хăвармалла. Машинăсене хĕл каçма лартнă чухне вĕсен чи кирлĕ пайĕсене сыхласа усрама складсене памалла. Тракторсем çинчен, сăмахран, свечасене, магнето, динамо, вентилятор ремене, ăшă çÿремелли трубасене, электричество провочĕсене илмелле. Комбайнсем çинчен моторсене, транспортерсене, ременсене тата ытти хаклă пайсене илсе памалла. Молотилкăсемпе тырă тасатмалли машинăсем çинчен ременсемпе решеткăсене илмелле. Вĕсене таса çĕрте кирлĕ пек пăхса усрамалла.

Хĕллехи вăхăтра тракторсемпе комбайнсем тата ытти машинăсем МТС-сен килкартисенче, сарайĕсенче пулмалла. Ялхуçалăхĕнчи хăшпĕр машинăсене — плугсемпе сеялкăсене, молотилкăсене кăна колхозсенче хăварма юрать. Анчах вĕсене пăхса усрама колхозсемпе килĕшÿ тумалла. МТС директорĕсемпе механиксен колхозсенче хăварнă машинăсене уйăхра пĕр хутран кая мар тĕрĕслемелле.

Тракторсемпе комбайнсем, сеялкăсемпе плугсем — пирĕн бригадирсемпе комбайнерсен тата трактористсен хĕçпăшалĕсем пулса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсене яланах лайăх пăхаççĕ. МТС работникĕсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем пек пулма тивĕçлĕ. Ĕçрен пушанна машинăсене халех МТС-сен килкартийĕсене илсе пырса, вырнаçтарса лартмалла. Килкарти тавра картасем тытмалла. Сеялкăсемпе культиваторсене тата ытти машинăсене хĕл пуласса кĕтмесĕрех юсама тытăнас пулать. Хĕллехи вăхăтра колхозсенче хăвармалли машинăсене те халех йĕркене кĕртмелле. Бригадăри мĕнпур машинăсене пĕр колхоза пуçтарса лартмалла.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлеме ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ инспекторсен штатне тунă. Пирĕн республикăра 7 инспектор пур. Вĕсем кăçал машинăсене мĕнле пăхса усранине 28 çĕрте тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕсленĕ чухне 13 МТС кăна машинăсене лайăх пăхса усрани палăрнă.

Республикăри хăшпĕр МТС директорĕсемпе механикĕсем кăçал та машинăсене тирпейлĕ пăхса усрама хатĕрлемен. Ĕçрен пушанна машинăсене юсама тытăнман. Уйхирсене тухсан тирпейсĕр ларакан сеялкăсемпе культиваторсене чылай курма пулать. МТС директорĕсемпе механикĕсен ялхуçалăх машинисене лайăх пăхса усрамалла тăвас пулать. Трактористсемпе бригадирсене ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи августăн 11-мĕшĕнче «МТС трактористчĕсене, комбайнерĕсене, бригадирĕсене, механикĕсене тракторсемпе комбайнсене лайăх пăхса усранăшăн тата вĕсемпе туллин усă курнăшăн хушса тÿлесси çинчен» кăларнă постановление тĕплĕн ăнлантарса памалла. Трактористсемпе комбайнерсене машинăсем çумне 3—5 çуллăха çирĕплетмелле. Çаксене туни ялхуçалăх машинисене лайăх пăхса усрама, вĕсемпе туллин усă курма майсем туса парать.

И. ДОЛГАНОВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн производство пайĕн инженер-механикĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене пĕлсе тăма

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт Управленийĕ автотранспорт кирлĕ пулакан предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене çакна пĕлтерет: яналасем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, малашне тÿрех Автоуправленин Коммерчески эксплоатаци отделĕнчен ыйтмалла (Шупашкар хули, Союзнăй ур. 4).

Яналасем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, заявкисене малтанах парса хумалла, турттарас кун çитиччен сахалтан та 5 талăк малтантарах парса хумалла.

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИЙĔ. 3—1.

Ноябрь уйăхĕн 5-мĕш числинче Шупашкар хулинче КÿЛНĔ ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çапла: ячĕ — „Малай", тĕсĕ шуркăвак, çÿллĕшĕ — 133 см., 1931 çулта çуралнă.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Цивильский район, Правлению колхоза „Лĕпсер".

1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче КĂÇАЛХИ ТИХА ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çапла: кĕсре, тĕсĕ — хура, çамки çинче шурă паллă пур. Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Аликовский район, Правлению Чувашско-Сорминского колхоза „Серп и молот".

Ĕç резервĕсен управленине çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: снабжени отделĕн начальникĕ, экономист, производствăлла вĕрентĕвĕн старши инспекторĕ, çуртйĕрне вăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас ĕçĕн инспекторĕ. 3—1.

ЧĂВАШ СЕЧ ЯЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУТНЕ çакăн пек работниксем: факультет секретарĕсем, кассир, секретарь-машинистка кирлĕ.

Иртнĕ октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнче Калинино дачинчен 2 ЛАША ÇУХАЛНĂ. Паллисем çакăн пек: пĕри—10 çулхи кастарнă лаша, çÿллĕшĕ—136 сантиметр, тĕсĕ—çÿрен, çилхи икĕ еннелле, çурăмĕ çинче шурă тăрăх пур, малти сылтăм ури уксаклать; тепри—20 çулхи кастарнă лаша, çÿллĕшĕ—137 сантиметр, тĕсĕ—хура, çилхи сылтăм еннелле, çăмси çинче шурă тăрăх пур.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: село Калинино, Калининского района, Чувашской АССР, Дорожно-эксплоатационной дистанции Дорожного Управления.

Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче Вăрнар леспромхозĕнче ĕçленĕ çĕртен ЛАША СУХАЛЧĔ. Паллисем çаксем: тĕсĕ — тĕттĕм çÿрен, сылтăм хăлхине çурнă, хÿрине татнă.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Октябрьский район, Правлению колхоза „Красное Сормово".

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1874 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л. Тираж 14.400 экз.